Спорт

# Ӑмӑрту савӑнӑҫ парнелерӗ

Иртсе каякан ҫулта ҫемьесем хушшинче иртекен конкурссем сахал мар пулчӗҫ. Акӑ декабрӗн 19-мӗшӗнче те Спорт ҫуртӗнче районти ҫемьесен хушшинче « Атте, анне тата эпӗ – спортпа туслӑ ҫемье» ятпа интереслӗ ӑмӑрту иртрӗ. Конкурса хутшӑнакансем – ашшӗсем, амӑшӗсем тата вӗсен 12 ҫула ҫитмен пӗр ачи.

Шел пулин те, унта Муркаш, Оринин, Ильинка тата Москакасси ял тӑрӑхӗсенчи 5 ҫемье ҫеҫ хутшӑнчӗ.(Пирӗн районта вара тӑватӑ ял тӑрӑхӗ кӑна мар). Апла пулин те район администрацийӗн вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики, физкультурӑпа спорт пайӗн специалисчӗсем тӑрӑшнипе ӑмӑрту питӗ хаваслӑ иртрӗ.

Тӗрлӗ йышши эстафетӑсене пур ҫемье те савӑк кӑмӑлпа, туслӑн чупса тухма тӑрӑшрӗ. Ӑмӑрту тени вара ҫӗнтерӳҫӗсемсӗр пулмастех. Кунта та жюри вӑйлисене палӑртрӗ. Республика шайӗнче Муркаш ятне хӳтӗлеме Муркаш ял тӑрӑхӗнчи Лоцмановсен ҫемйи тивӗҫлӗ пулчӗ. Иккӗмӗш вырӑна Оринин ял тӑрӑхӗнчи Прокопьевсен ҫемйи тухрӗ. Муркашри Ивановсен ҫемйи, ӑмӑртура вӗсен ывӑлӗ чи кӗҫӗнни пулчӗ пулин те, виҫҫӗмӗш вырӑн ҫӗнсе илме пултарчӗ.

Мала тухнисене грамотӑсемпе хаклӑ парнесем парса чысларӗҫ. Ӑмӑртӑва хутшӑннӑ Ильинсен тата Бычковсен ҫемйисем те Тав ҫырӑвӗсемпе асӑнмалӑх парнесене тивӗҫрӗҫ.

Ӑмӑрту ҫемьесенчи туслӑха татах та вӑйлатрӗ, вӗсене савӑнӑҫ парнелерӗ. Ҫемьепе тунӑ ҫитӗнӳ, тем тесессӗн те, чи хаклисенчен пӗри-ске.




**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сӑн ӳкерчӗкре: акӑ вӗсем – ҫӗнтерӳҫӗсем.**

Ҫӗнӗ кӗнеке

# Ҫамрӑкла пуҫ хунисене асӑнса

«Живи и помни». Нумай пулмасть ҫак ятпа пирӗн республикӑра астӑвӑм кӗнеки кун ҫути курчӗ. Ҫак пысӑк та хӑтлӑ кӗнеке Чӑваш Енӗн паттӑр ывӑлӗсем ҫинчен.

Чечня, Таджикистан, Абхази, Кӑнтӑр Осети. Шӑпах ҫак хӗрӳ вырӑнсенче пуҫ хунӑ ҫамрӑк каччӑсен, контрактпа ҫар тивӗҫне пурнӑҫланӑ, анчах вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗнӗ паттӑрсен сӑн ӳкерчӗкӗсене тата вӗсен ҫинчен материалсем республикипех пуҫтарма пултарнӑ авторсем. Вӗсенчен пӗри – 13 ҫул каялла Чечняри вӑрҫӑра ывӑлне ҫухатнӑ Ангелина Тимофеева. Хӑйӗн чунри ыратӑвне кӗнеке страницисем ҫине куҫарнӑ вӑл. Ҫавӑнпа та кӗнеке никама та хумхантармасӑр хӑвармӗ.

Хальлӗхе кӗнеке пысӑках тиражпа тухайман-ха. Укҫа-тенкӗ ҫитменни чарса тӑрать. Анчах ҫитес вӑхӑтрах ӗҫ малалла каймалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Культура хыпарӗсем

# Тӑрӑшса ӗҫленин усси пулмаллах

Пирӗн, ял ҫыннисен, уйрӑмах ҫамрӑксен, культура шайӗ ӳстӗр тесе эпир, Шетмӗпуҫ ял тӑрӑхӗнчи культура ӗҫченӗсем, тӗрлӗрен мероприятисем ирттеретпӗр.

Вӗсем интереслӗрех пулччӑр тесе вырӑнти тӗрлӗ специалистсене те хӑнана чӗнмесӗр хӑвармастпӑр. Нумай пулмасть ташӑ касӗнче Шетмӗпуҫӗнчи ҫемье врачӗн офисӗнче ӗҫлекен Н. Клементьевапа Т. Кириллова медсестрасем «СПИД тата венери чирӗсем» ятпа ҫамрӑксемпе усӑ калаҫу ирттерчӗҫ. Калаҫу питӗ хӗрӳ иртрӗ. Ҫамрӑксем нумай-нумай ыйту пачӗҫ.

Тӗслӗх библиотекӑра вара «Наркотик тата эпир» темӑпа кӗнекесен куравне йӗркелерӗмӗр. Уйрӑмах ҫамрӑксем интересленчӗҫ куравпа.

**В. НИКИТИНА, Шетмӗпуҫӗнчи библиотека ертӳҫи.**

Сывлӑх

# Ҫынсен сывлӑхӗшӗн тӑрӑшаҫҫӗ

25 ҫул ҫын ӗмӗрӗнче кӑна кӗске тапӑк пек. Кашни кун иртен пуҫласа каҫчен ытти сен сывлӑхӗшӗн тӑрӑшакан васкавлӑ пулӑшу уйрӑмӗшӗн ҫак хисеп вара пӗрре те сахал мар. Шӑпах чӗрӗк ӗмӗр каялла, 1983 ҫулхи декабрӗн 1-мӗшӗнче пуҫарса янӑ та ӗнтӗ Мӑн Сӗнтӗрти васкавлӑ пулӑшу уйрӑмӗн ӗҫне. Унтанпа миҫе ҫын пурнӑҫне ҫӑлнӑ пуль, миҫе ҫынна медицина пулӑшӑвӗ панӑ пуль тата!

Малтанхи ҫулсенче Козьмодемьянск – Муркаш автоҫул хӗррипчех вырнаҫнӑ йывӑҫ ҫуртра (халӗ унта больницӑн клиника лабораторийӗпе бухгалтерийӗ вырнаҫнӑ) Мӑн Сӗнтӗрти васкавлӑ пулӑшу уйрӑмӗнче кунти больницӑн медсестрисем ӗҫлеме тытӑннӑ. Паллах, хӑйсен тӗп ӗҫӗнче ҫӗрлехи дежурствӑсем пулман чухне. 1984 ҫулхи январь уйӑхӗнче васкавлӑ пулӑшу уйрӑмне ӗҫлеме Николай Васильевич Гаврилов фельдшера илесҫӗ.

Васкавлӑ пулӑшу уйрӑмӗ ӗҫ кунӗсене каҫхи 6 сехетрен тытӑнса ирхи ултӑччен, канмалли кунсенче талӑкӗпех ӗҫленӗ. Малтанах чӗнӳсем те ытла нумай пулман, кайран вара, «03» службӑ ҫинчен таврара пурте пӗлсе ҫитсен, чӗнӳсем пӗрин хыҫҫӑн тепри те сахал мар килнӗ. Васкавлӑ пулӑшу уйрӑмӗн машини те 1984 ҫултанпа чӗнӳсене тухма пуҫланӑ.

Тепӗр икӗ ҫултан ҫеҫ ҫак уйрӑмӑн штачӗ ӗҫлекенсемпе тулнӑ. Н.В. Гаврилов, А.А. Астраханцев, Н.Г. Иванова, В.Н. Васильев фельдшерсем тата 4 водитель кашни кун ҫынсен сывлӑхӗшӗн тӑрӑшнӑ.

Н. Гаврилов фельдшер паянхи кун та васкавлӑ пулӑшу уйрӑмӗнче тӑрӑшать. Хальхи вӑхӑтра «Сывлӑх» нацпроектпа килнӗ «Газель» тата УАЗ–3962 машинӑсем пурри ӗҫре пысӑк пулӑшу пулнине калать вӑл. Вӗсенче ҫӗнӗ оборудовани пулни те ӗҫре тӑтӑшах пулӑшать фельдшерсене. «Ӗҫ условийӗсем палӑрмаллах лайӑхланчӗҫ. 2006 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнчен пуҫласа Раҫҫей Федерацийӗн Сывлӑх сыхлавӗпе социаллӑ аталану министерствин приказӗпе килӗшӳллӗн эпир те ҫынсене стандарт мелӗпе сиплессине ӗҫе кӗртнӗ», – тет Николай Васильевич.




Район карттине, уйрӑмах Мӑн Сӗнтӗрти васкавлӑ пулӑшу машини чӗнӳсемпе тухса ҫӳрекен ялсене кунта ӗҫлекенсем питӗ лайӑх вӗренсе ҫитнӗ. И. Дмитриев водитель те ҫак ӗҫре пӗр улшӑнмасӑр 25 ҫул вӑй хурать. Акӑ пӗлтӗр пурӗ 2798 чӗнӳпе ҫула тухнӑ васкавлӑ пулӑшу ушкӑнӗ. Ытларах юн пусӑмӗ пысӑк пулнипе тата чӗре чирӗсемпе аптӑракансем патне ҫула тухать васкавлӑ пулӑшу машини.

Паян Мӑн Сӗнтӗрти уйрӑмра ӗҫре пуян опыт пухнӑ Н.В. Гавриловпа юнашар А. Одинцов аслӑ фельдшер, А. Ежуков тата С. Иштудов фельдшерсем ӗҫлеҫҫӗ. Аслинчен вӗренсе пынипе пӗрлех ҫӗнӗрексене алла илсе ӑсталӑха ӳстерме тӑрӑшаҫҫӗ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сӑн ӳкерчӗкре: И. Дмитриев водительпе А. Ежуков фельдшер.**

ВНИМАНИЕ У НАС
ОБВАЛ ЦЕН
СКИДКИ
ДО 40%

Бытовая техника «Лидер»

ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ

*Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4.*
*Тел.: 2-13-80.*
*С 20 декабря по 10 января - скидки.*

Подробности акции спрашивайте в магазине бытовой техники “Лидер”

2-3.

Продаю сено в тюках (люцерна). Цена договорная. Адрес: д. Сарчаки, ул. Советская, д. 30. Тел.: 50-75-51, 8-927-852-62-39. Данилова Т.И.

ООО «Лотос» принимает заявки на проведение новогодних вечеров. Продаем мотоблоки, банные печи, прицепы к мотоблокам. Производим все виды сварочных работ.
Тел.: 8-927-848-84-30. 1-2.

КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4.
Тел.: 8-927-995-03-41, 2-18-13. 3-13.

Стальные двери, межкомнатные, пластиковые окна с установкой, гарантией. Новогодние скидки.
Тел.: 8-927-841-67-31. 3-5.

## Пӗлтерӳсем. Объявления

**25 декабря 2008 года с 10 до 12 часов состоится прием граждан в администрации Моргаушского района и.о. руководителя Управления Федеральной регистрационной службы по Чувашской Республике Екатериной Карпеевой. Записаться на прием можно по телефону: 2-11-47.**

Спутниковое телевидение
от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95.
Спутниковый интернет. 13-20.

Мир окон и дверей
ОКНА пластиковые
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
от ведущего производителя
Чувашии теперь...
в МОРГАУШАХ
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
29-80-60 8-927-669-80-60
*Набор по уходу за окнами и москитная сетка – в подарок! Скидка до 25 %.*

КПКГ «Заря-Кредит» принимает сбережения от пайщиков на выгодных условиях по адресу: остановка Москакасы, здание «Автомиг», 2 этаж.
Тел.: 66-2-16, 8-937-370-23-69. 8-11.

Спутниковые антенны ТРИКОЛОР
с установкой, регистрацией и обслуживанием.
Тел.: 8-905-345-77-19. 3-5.

ИП АКИМОВ продает
Керамзитобетонные блоки.
Деревянные окна - простые, евро.
Двери - филенчатые, крестьянские.
Вагонка - сосна, липа. 4-6.
Тел.: (8352)50-77-80, 8-917-655-38-65, 8-927-856-52-09.

Автосервис
д. Рыкакасы 2-2.
ВСЕ ВИДЫ РЕМОНТНЫХ РАБОТ
Капитальный ремонт двигателя, капитальный ремонт КПП, ремонт ходовой части, ремонт трансмиссии, ремонт подвесок, электрика, сварочные работы.
Круглосуточно, без выходных. Тел.: 8-903-379-84-40.

Открывается новая парикмахерская «Экономь» в бывшем магазине «Ласточка» на территории рынка «Моргаушский». Справки по тел.: 8-927-864-43-45.

Продаю: кухонный гарнитур, стол-книжку, компьютерные столы, комоды, тумбы под ТВ, журнальные столы.Тел.: 8-927-840-97-91.

Спутниковые антены от 3000 руб.
Триколор 6200 руб.
Тел.: 8-906-385-29-30. 1-5.

Моргаушская районная газета
«Ҫӗнтерӳ ялавӗ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 2 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 23.12.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3608.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.